Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

51 (7905) № * Юн кун, 2011 çулхи утă (июль) уйăхĕн 6-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Пуçарулăхпа хастарлăх ытларах кирлĕ

***«Пĕр-пĕр ĕçе май килнĕ таран лайăхрах пурнăçлас тесе шутлатăн, анчах яланхи пекех пулса тухать». Çакăн евĕр каларăша илтмен çын çук та пулĕ. Кĕçнерни кун, июнĕн 30-мĕшĕнче, районти çамрăксен форумĕ иртнĕ пирки те сăмаха çапла пуçлас килет. Çамрăксене питĕ кирлĕ мероприяти пулчĕ: конкретлă, ĕçлĕ тата уçă калаçусем, çамрăксемшĕн питĕ вырăнлă сĕнӳсем, тематикăна тĕрĕс палăртса йĕркеленĕ интереслĕ программа.***

***Программа тенĕрен. Район администрацийĕ çамрăксене тĕрлĕ сферăри тĕрлĕ енлĕ мероприятисене явăçтарма нумай ĕç пурнăçлать. Анчах та çамрăксем енчен пуçарулăх, хастарлăх сахалрах çав. Акă Лантăш вăрманĕн уçланкине 60–70 çамрăк кăна пухăнни те форум анлăшне самаях хĕсрĕ: унти опыт районăн кашни кĕтесĕнчи çамрăк патне (пурĕ 177 ял пулнине шута илсен пушшех те!) хальлĕхе çитмерĕ.***

*(Вĕçĕ 4-мĕш стр.).*

***Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.***

Çамрăксен форумĕ




***«Моргаушимежрайгазра» вăй хуракан Евгений Горбунов ПТО инженерĕ, Владимир Алексеев инженер-программист, Юрий Николаев ĕç сыхлавĕпе техника хăрушсăрлăхĕн инженерĕ тата Николай Захаров водитель форумра питĕ активлă пулчĕç.***

Кĕскен

### Дачăра та прописка пур

Иртнĕ кĕçнерни кун РФ Конституци сучĕ граждансене дачăсенчи çуртсенче те пропискӑна тăма ирĕк панă. Ку çеç те мар. Халĕ пурăнма юрăхлă кирек хăш çуртра та пропискӑна тăма юрать. Çурчĕ ăçта вырнаçни те пĕлтерĕшлĕ мар.

### Ĕçсĕррисен йышĕ чакать

Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне республикăра ĕçсĕррисен йышĕ 1,7 процентпа танлашнă. Атăлçи округне кĕрекен Киров облаçĕнче – 2,2 процент, Пермь крайĕнче – 2,1, Удмуртире – 1,8, Пушкăртпа Тутарстанра – 1,7.

Симĕс ĕç çи – 2011

## Кăтартусем ӳсеççĕ

Утă уйăхĕ кунран кун вăй илсе пырать. Çĕр ĕçченĕ паян иртен пуçласа каçчен выльăх апачĕ хатĕрлессипе тимлет. Ĕнерхи куна уяр кунсемпе туллин усă курса районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем пĕтĕмпе 3092 тонна (56,2 процент) утă, 3786 тонна (20,5 процент) силос хатĕрленĕ. Талăк хушшинче çак кăтартусем 498 тата 409 тонна ӳснĕ.

Иртнĕ талăкра «Свобода» хуçалăх 100 тонна (440 т) утă, 209 тонна (509 т) силос янтăланă. Кăтартусем çавăн пекех Ильич яч. хис., «Оринино», «Ударник», Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче те сумлă ӳснĕ.

Экзамен

## Орининсен балсем пысăкрах

Район администрацийĕн вĕрентӳ пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх 2010–2011 вĕренӳ çулĕнче пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене пурĕ 241 выпускник тата малтанхи çулсенче шкул пĕтернĕ 4 выпускник тытнă. 11 класс вĕренсе пĕтернисем вырăс чĕлхи тата математика предмечĕсемпе пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене обязательнăй майпа тытрĕç. Ытти предметсемпе – суйласа илнĕ тăрăх.

Вырăс чĕлхипе районти вăтам балл 61,1-пе танлашнă. Орининти вăтам шкултан вĕренсе тухнисен вăтам кăтартăвĕ ыттисенчен лайăхрах – 70,67 балл, Нискассинчи вăтам шкул выпускникĕсен вăтам балĕ – 67,56, Муркашри вăтам шкултисен – 66,42.

Математикăпа районти вăтам кăтарту 53,35 балпа танлашнă. Пысăкрах вăтам кăтарту пухнисем вара çаксем: Орининти вăтам шкул – 60,2 балл, Муркашри вăтам шкул – 59,58 балл, Чуманкассинчи вăтам шкул – 56,33 балл.

Пĕрлехи патшалăх экзамен формипе виççĕмĕш предмет суйласа илнисем ытларах Мăн Сĕнтĕрти, Калайкассинчи тата Муркашри вăтам шкулсенче пулнă.

## Июлĕн 1-мĕшĕнчен – сенкер тĕслĕ больничнăй хучĕ

Çĕнĕлĕх

Раççейре çын вăхăтлăх ĕçлеме пултарайманнине çирĕплетекен çĕнĕ йышши хут (больничнăй) ĕçе кĕрет. Кун пирки РФ Сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерстви июнĕн 22-мĕшĕнче ятарлă хушу кăларса пĕлтерчĕ. Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса эпир хăнăхнă çутă симĕс тĕслĕ хут вăйран тухать. Ун вырăнне алла сенкер тĕслĕ А4 форматлă хут тытмалла пулать. Алăпа çырма хăварнă пушă клеткăсем çутă-сарă тĕслĕ.

Социаллă страховани фончĕ пĕлтернĕ тăрăх çĕнĕ йышши больничнăй хучĕ малтанхинчен çӳллĕрех шайри хӳтлĕхпе палăрса тăрать. Мĕншĕн тесен малтанхи симĕс тĕслĕ больничнăй пек суя хут туса пуякансем те нумайланма тытăннă.

Çĕнĕ бланк çинче ĕç параканăн çырса памалли йĕркесем те пур, автоматизациленĕ майпа çырса тултармалли графасем те. Хальхи больничнăй çинче пулнă хӳтлĕх паллисем вырăнне социаллă страховани фончĕн логотипĕ пулать.

Хутăн пĕр енне кăна çырма тивĕ. Хыçал енче – больничнăй хутне тĕрĕс тултарма вĕрентни çинчен çырса пани. Ĕç паракан чирлекенĕн ĕç вырăнне, хăçан ĕçлеме тытăннине, ăна страхланă стажа, сотрудникăн вăтам ĕç укçине тата ыттине те кăтартса çырать.

Больничнăй хутне автоматизациленĕ майпа тултармаллине пăхса хунине каларăмăр. Çакна валли хутăн сылтăм енчи çӳлти кĕтесре штрих-код пур, сулахай енче – пушă хăварнă вырăн. Вăл ятарлă код валли. Больничнăй хутне илекенĕн ĕçлеме пултарайман сăлтавне, режима пăсни çинчен паллă туни (кун пекки пулнă пулсан), чирлĕ çыннăн тăванлăхне кăтартни (çын ĕçлеме пултарайманни тепĕр çынна пăхнипе çыхăннă пулсан) тата ытти хăш пĕр информаци те ятарлă кодпа пулать. Çакă вара малашлăхра больничнăйсене хутсăр мелпе йĕркелесе пыма та май парĕ.

Социаллă страховани фончĕ çулсеренех 30 миллион ытла больничнăй хучĕ тăрăх укçа тӳлет. Ку вăл чирлесе ĕçе тухман 400 миллион кунпа танлашать. Пĕтĕмĕшле тишкерӳ хыççăн больничнăй хучĕсен 3 процентне яхăн тĕрĕс марлăхсемпе усă курса панине палăртаççĕ. Çапла вара çулсеренех социаллă страховани фончĕ 1,5 миллиард тенкĕлĕх тăкак курнă.

**Хамăр инф.**

Июлĕн 8-мĕшĕ – Пĕтĕм Раççейри çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире пурне те Пĕтĕм Раççейри çемье, юрату тата шанчăклăх кунĕ ячĕпе саламлатăп.

Пирĕн çĕр-шывра çак уява паллă тума пуçлани хăех çемье кашнин пурнăçĕнче мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлине кăтартса парать. Çемьесене пулăшас тĕллевпе патшалăх шайĕнче те нумай ĕç туса ирттереççĕ: ача пособийĕсен, ача амăшĕн капиталĕн виçи хăпарсах пырать, çемьесене çурт-йĕрлĕ пулма пулăшас тĕллевпе тĕрлĕрен программăсем пурнăçа кĕреççĕ.

Çемье телейĕ вара пирĕнтен хамăртан килет. Юратакансем пĕр-пĕрне каçарма пĕлеççĕ, шанаççĕ, ĕненеççĕ. Чун хĕлхемĕ те, чăтăмлăх та çитет вĕсен çакна валли.

Çакăн пек туслă çемьере вара ачасем те чăн-чăн çын пулса ӳсеççĕ: тĕрĕс воспитани илеççĕ, пур енлĕн аталанса ӳсеççĕ, ырă ĕçсем тума вĕренеççĕ. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕн ачисем туслă çемьере çитĕнччĕр, вĕсене çемье, тăван кил ăшши ĕмĕр тăршшĕпех вăй-хăват парса тăтăр тесе тăрăшмалла. Пирĕн, аслисен, хамăр ачасемшĕн ырă тĕслĕх пулмалла.

Çак уява халалланă Петрпа Феврония Муромскисем пек пуласчĕ пирĕн: ĕмĕр тăршшĕпех таса та ырă чунлă пулнине, пĕр-пĕрне чĕререн парăнса, ăнланса, пулăшса, чăн-чăн таса юратупа пурăннине нимĕн те çитмест.

Пурне те çирĕп сывлăх, телейлĕ те вăрăм кун-çул сунатăп. Чун ăшши пĕрре те ан иксĕлтĕрччĕ сирĕн.

**В. КАЛИНИН,**
**райадминистрацин пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ.**

Хаксем

## Ăçта йӳнĕрех?

***Районта вырнаçнă суту-илӳ точкисенче (лавкка тата пасар) июнĕн 28-мĕшĕ тĕлне социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç таварĕсен хакĕсене танлаштарса кăтартни.***

**Колонкăсенче: 1. Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсем; 2. «Самообслуживание»; 3. «Продукты №1»; 4. «Визит»; 5. «Елена»; 6. Муркаш пасарĕ.**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Чăх(тукмаксăр пуçне),кг | 86 | – | 85 | – | 100 |
| Шăнтнă пулă, кг | 69 | 74 | 65 | – | 55 |
| Услам çу, кг | 250 | 226 | 156 | 250 | 195 |
| Тип çу, кг | 63,5 | 69 | 62 | 62 | 65 |
| Сĕт, çу шайĕ 3,2 проц. пĕчĕк. кг | 29,5 | 28 | 39 | 30,5 | 26,4 |
| Çăмарта, 10 шт | 24 | 22 | 25 | 31 | 33 |
| Сахăр песукĕ, кг | 36 | 36 | 35 | 38,5 | 34 |
| Тăвар, кг | 7 | 7 | 7,9 | 9 | 6 |
| Тулă çăнăхĕ, кг | 18 | 16,5 | 17 | 20 | 18 |
| Рис, кг | 35 | 36 | 28 | 42,5 | 28 |
| Вир кĕрпи, кг | 46 | 40 | – | – | 46 |
| Хура тулă кĕрпи, кг | 95 | 88 | – | – | 95 |
| Вермишель, кг | 22,5 | 22 | 19 | 25 | 21 |
| Çĕр улми, кг | 31 | 31 | 35 | – | 35 |
| Шурă пуçлă купăста, кг | 21,5 | – | 25 | – | 30 |
| Пуçлă сухан, кг | 33 | 34 | 30 | – | 35 |
| Пан улми, кг | 66 | 65 | 60 | 60 | 60 |
| Кишĕр, кг | – | 35 | 40 | – | 40 |

Ан улталанăр

## Конвертпа панă ĕç укçи

Конвертпа ĕç укçи паракан организацисем патшалăха та, хăйсен ĕçченĕсене те улталаççĕ.

Çапла, çынсен ĕç укçине паян тата ытларах илес килет. Кун пек чухне организаци страхлакан взноссене те, ĕçлекенĕн тупăшран тивекен налукне те куçармасть.

Кун пек ĕçлекене банксенче кредит илме йывăр, пенси пĕчĕк пулать, больничнăйпе те кирлĕ пек тӳлемеççĕ.

Çавăнпа та малашлăх пирки шутламалла. Кун пек тĕслĕхсемпе тĕл пулма тивнĕ пулсан сире 6 № налук инспекцине (8-83547) 23-0-64 номерлĕ телефонпа шăнкăравласа пĕлтерме ыйтатпăр.

**Е. АРСЕНТЬЕВА,**
**налук тӳлекенсемпе ĕçлекен пай ертӳçи.**

Саламлатпăр



Хаклă мăшăра, юратнă аттене, кăмăллă асаттене, хисеплĕ тăвана – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Герман Димитриевич УТКИНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Сывлăху сан çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм килтĕр. Ачусен, мăнукусен хаваслă сассине итлесе ырлăхне курса савăнмалла пултăр.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, ачисем, кинĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**



Чи хаклă çыннăмăра, аннене, асаннене – Сыпай ялĕнче пурăнакан **Клавдия Митрофановна ЯШКОВĂНА** 85 çулхи юбилей ячĕпе пĕтĕм чун-чĕререн саламлатпăр. Хурçă пек çирĕп сывлăх, инçет çул пек вăрăм ĕмĕр, иксĕлми телей сунатпăр. Яланах хаваслă та ырă, чунупа çамрăк пул, чир-чĕр мĕнне ан пĕл. Мăнуксен ачисене курса савăнмалла пултăр. Пурнăçу тулăх тăтăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр.

**Саламлаканĕсем: 3 ывăлĕ, 3 кинĕ, 10 мăнукĕ, тăхлачисем, çывăх тăванĕсем.**

Выльăх апачĕ хатĕрлетпĕр

## Симĕс ĕç çи: пĕлтĕр тата кăçал

Ир килет те каç пулать, çĕрпе кун ылмашăнать, вăхăт малалла шăвать. Акă пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен хирĕсенчи çур аки вăхăчĕ черетлĕ историе çырăнса юлчĕ. Маларах акнă хирсем симĕс кавирпе витĕнчĕç. Çакăнпа пĕрлех хресчен умне черетлĕ ĕç çи тухрĕ: ырана хăвармасăр унăн выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ янтăламалла. Ăна çителĕклĕ те пахалăхлă хатĕрлесси ĕç çине мĕнле яваплăхпа пăхнинчен нумай килет. Çакна шута илсе паян эпĕ кăçалхи симĕç ĕç çи хăвăртлăхне тата пурнăçланă ĕçсен калăпăшне иртнĕ çулхипе танлаштарса пăхрăм. Ăнса пулнă курăк улăх-çаранта хумăн-хумăн кашласа ларать. Çитес хĕл валли ытлă-çитлĕ апат янтăлама май пуррине паян никам та хирĕçлемест. Анчах... Юлашки кунсемччен час-час çумăрлă тăнă çанталăк çĕр ĕçченне выльăх апачĕ янтăлассипе тухăçлă ĕçлеме ура хурса пычĕ. Çапах çакнашкал лару-тăрурах пирĕн хушăмăрта ĕçе пĕлсе йĕркеленипе ӳсĕмлĕ вăй хуракансем пурри те курăнать.

## Иртнĕ çулпа танлаштарсан

Кăçалхи ĕçсене иртнĕ çулхи шăрăх кунсемпе танлаштарса пăхни те паян ытлашшиех мар. Мĕншĕн тесен пĕлтĕр выльăх апачĕ çук тесе Раççейăн тĕрлĕ регионĕсене çитме тӳр килчĕ. Çаврăнăçуллисем хĕл каçа выльăхсен йышне сыхласа хăварчĕç, патшалăх пулăшăвĕпе те çителĕклĕ усă курчĕç. Кăçал инçе каймасăрах апачĕ пур темелле, анчах çанталăк условийĕсем тулли хăватпа ĕçлеме чăрмантараççĕ. Утă уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне пĕлтĕр тата кăçал выльăх апачĕ янтăласси епле пулнă-ха?

Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенчен оперативлă тăратнă кăтартусене пăхсан пĕлтĕрхи шăрăх çанталăкра утă уйăхĕн 4-мĕшĕ тĕлне район нумай çул ӳсекен курăксене 54 процент çулнă. Унран 4193 тонна (81 процент) утă, 3750 тонна (44 процент) сенаж, 2170 тонна (17 процент) силос янтăланă. Кăçал асăннă кун тĕлне çак кăтартусем самай пĕчĕкрех пулчĕç. Районти çĕр ĕçченĕсем умри йывăрлăхсене çĕнсе нумай çул ӳсекен курăксене 47 процент (2680 гектар) çинче çулса пăрахрĕç. Çулнă курăкран пĕрлехи вăйпа 2694 тонна (49 процент) утă, 3377 тонна (18,3 процент) силос, 5 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ янтăларĕç. Паянхи уяр кунсенче выльăх апачĕ янтăлас ĕçсен хăвăртлăхĕ ӳсессе шанмалли кăна юлать. Манма кирлĕ мар, шăркана ларакан ыраш вырма çывхарнине систерет.

## Уйрăм хуçалăхсенче

Пĕрешкел условисенчех кăçал утă янтăлассипе Е. Андреев яч. хис. (260 тонна е 96 процент), Суворов яч. хис. (570 тонна е 112 процент), «Свобода» (340 тонна е 48 процент), Чкалов яч. хис. (84 тонна е 47 процент), «Герой» (127 тонна е 35 процент) хуçалăхсем ыттисенчен пуçаруллăрах та ăнăçлăрах ĕçлесе пыраççĕ. Çак кăтартусем асăннă хуçалăхсенче ĕç дисциплини çирĕппине, ĕçе тĕрĕс йĕркеленине кăтартса параççĕ. Хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ĕçне тишкерсен кăçал В. Горбунов, В. Бархаткин тата А. Пихтеров фермерсене ырăпа палăртмалла.

## Çуртрисем çинче

Уяр кунăн кашни саманчĕпе усă курма тăрăшакансем çуртрисем çинчи çум курăкĕпе тата ӳсен-тăрансен чирчĕрĕсемпе кĕрешессине те иккĕмĕш вырăна хăвармаççĕ. Кунта та хăйне май танлаштару тума пулать, анчах çĕр улми пуссинчисĕр пуçне ĕçсен хăвăртлăхĕ иртнĕ çулхипе пĕр шайрах пыраççĕ. Анасем çинчи çум курăкĕсемпе химилле майпа кĕрешессипе Ильич яч. хис., «Ударник», Чкалов яч. хис., «ДаАн», «ВаСем», «Колос» хуçалăхсемпе нумай хресчен (фермер) хуçалăхĕнче вăхăтра пурнăçланă.

«Восток», «Герой», «Оринино», «ДаАн», «ВаСем» хуçалăхсемпе В. Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕнче çĕр улми речĕсене иккĕмĕш хут 100 процент чĕрсе кăпкалатнă. Çакă, танлаштаруллă пăхсан, пĕлтĕрхинчен 3 хут пĕчĕкрех.

**А. БЕЛОВ тишкернĕ.**

# Пулас тупăша паян никĕслесчĕ

Симĕс ĕç çи пахалăхĕ – малашлăхшăн

***Çу кунĕсем – йӳнĕ хăйхаклăхпа ытларах продукци илмелли вăхăт. Ял хуçалăхĕнче симĕс ĕç çи пуçланнă май пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем ăна малашлăх аталанăвĕн никĕсне хураççĕ-и, производствăна çĕнĕ шая çĕклессине тĕллеве лартаççĕ-и? Çак ыйтусем çине хурав шыраса хаçат редакцийĕн ял хуçалăх пайĕн редакторĕ А. БЕЛОВ районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцири ветлабораторинчи выльăх тухтăрĕпе А. КАЗАКОВА химик-токсикологпа тĕл пулнă. Калаçура пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли уяр кунпа усă курса янтăланă апата вăхăтра тĕрĕслессипе тата обществăлла выльăх-чĕрлĕхе продуктивлăха чакармасăр хĕл каçарма мĕн чухлĕ апат кирлипе паллашнă. Ĕç çине шут виçипе çеç мар, пахалăх тĕлĕшпе те пăхмалла. Апат виçипе пахалăхĕ тивĕçлĕ шайра пулсан пысăк продуктивлăх кĕттермĕ. Кун пек чух хуçалăхсен экономика тĕрекленĕвĕ те куç кĕрет.***

**– Алина Александровна, районта симĕс ĕç çи пуçланчĕ. Вăл уяр кунăн кашни сехечĕпе вăй илсе пырĕ. Пĕлес килет, мĕн чуль утă, сенаж тата силос янтăлама пăхаççĕ-ха пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем? Производствăна чакарас мар тесен апат виçи мĕнле шайра пулмалла?**

– Анчах çĕртме уйăхĕччĕ, сисмерĕмĕр те утă уйăхне кĕрсе кайрăмăр. Çу вăхăчĕ те хăвăрт иртсе кайĕ. Çавăнпа та ыранхи кун пирки шутлакансем паян иртен пуçласа каçчен утă янтăлаççĕ. Тĕллевсем вара пĕчĕк мар. Малтанласа пăхнă тăрăх хуçалăхсен çу каçа 5500 тонна утă, 6600 тонна сенаж, 18500 тонна силос хатĕрлемелле.

**– Эпĕ ăнланнă тăрăх ĕç çире пахалăх ыйтăвне мала тăратни вырăнлă пулмалла. Паха апат – çывăх пуласлăхра выльăх-чĕрлĕх отраслне малалла аталантармалли никĕс. Çапла вĕт?**

– Хирĕçлеместĕп, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессипе пĕрремĕш кун ĕçлемен çыншăн вăл каламасăрах паллă. Çавăнпа та эсир мĕн каласшăннине ăнлантăм. Хĕл инçетре тесе пахалăх çине алă сулас марччĕ. Инçетри вăл çитĕ. Кашни ĕçĕн хăйĕн вăхăчĕ. Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен ку вăхăтра кашни уяр кунпа туллин усă курса çитес хĕл валли бизнес-плансемпе килĕшӳллĕн выльăх апачĕ хатĕрлемелле. Тĕллевсем вара, куратăр, пĕчĕк мар. Ял хуçалăх ĕçченĕсем умĕнчи паянхи тĕп тĕллев – çак ĕçсене пахалăхлă пурнăçласси. Янтăлакан апат пахалăхне çийĕнчех Муркашри ветеринари лабораторийĕнчех тĕрĕслеттерме пулать. Хакĕсем пысăк мар. Утăн пĕр партине 6 енпе тĕрĕслеттерме пĕтĕмĕшле 88 тенкĕне, симĕс массăна – 88 тенкĕне, сенаж-силоса 11 тĕспе тĕрĕслеттерме 172 тенкĕне ларать. Апат-çимĕçре каротин, протеин тата ытти тутлăхлă япаласен хисепĕ мĕнлине пĕлес тесен тĕрĕслев партийĕсене апата хатĕрленĕ май экспертизăна вăхăтăн-вăхăтăн тăратсах пымалла. Тĕслĕхрен, утă ури туса пĕтерсенех унăн пахалăхне тĕрĕслеттерессе кун йĕркинче пулмалла. Сенаж-силоса вара пĕрремĕш тĕрĕслеве траншейăна хупас умĕн илсе пымалла, хыççăн – хупнăранпа пĕр уйăх иртсен, виççĕмĕш хут – хĕлле ăна выльăхсене çитерме пуçласан. Эпир кашнинчех апатри нӳрĕкпе каротин тата протеин виçине курса унăн класноçне палăртатпăр. Йывăрри нимĕн те çук темелле, анчах хăш-пĕр хуçалăхсем çак ĕç çине нумай чух çиелтен пăхаççĕ.

Силос-сенаж хатĕрленĕ чух та траншейăна кĕске вăхăтра хупмасан тата унта пынă массăна çителĕклĕ пусăрăнтарса тăмасан, тепĕр майлă каласан, технологие пăхăнмасан, силос-сенажăн пахалăхĕ палăрмаллах чакать. Кунашкал апатра выльăхсене кирлĕ витаминсем юлмаççĕ, выльăх организмне пачах кирлĕ мар çу кислоти (масляная кислота) нумайланать. Кун пек апатпа тăрантарнă выльăхăн организмĕнче веществосен ылмашăвĕ чакать, сĕтри çу хисепĕ пĕчĕкленет, выльăхсен организмĕ тĕрлĕ чирсемпе кĕрешейми пулать, пăрусем илесси пĕчĕкленет, вĕсем начар çуралаççĕ, ĕнесем пăруланă хыççăн вăхăтра пĕтĕленеймеççĕ. Çакна саплаштарма хăш-пĕр хуçалăхра çеç выльăхсене микро- тата макрохутăшсем параççĕ.

**– Алина Александровна, паян хуçалăхсенче силос хатĕрленĕ чух тĕрлĕрен хими консерванчĕсемпе усă курни пахалăхпа тӳрремĕнех çыхăннă пулас...**

– Ку вăл выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçри çĕнĕ технологипе çыхăннă. Малта пыракан технологисемпе пирĕн пур сферăсенче те çителĕклĕ усă курмалла. Хăшĕсем çакна хăйсен ĕç тĕллевне лартаççĕ. Акă иртнĕ тăватă çулта «Герой», Суворов яч. хис., «Оринино», Ильич яч. хис. хуçалăхсенче кальций пропионачĕпе усă курни ырă пулăм пулни палăрчĕ. Кăçал та силос-сенаж хатĕрлессипе нумай хуçалăхсем çак çултан пăрăнмасса шанас килет. Ку енĕпе «Оринино», «Герой», «Передовик», «Свобода», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис., Чапаев яч. хис. «Колос» хуçалăхсем ĕçлеме пуçларĕç. Çавăн пекех «закваска» консервантпа ĕçлекенсем пур: «Восток», «Ударник», Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсемпе «Путь Ильича» агрофирма. Пирĕн хуçалăхсем пĕрремĕшнех ытларах кăмăлларĕç курăнать. Асăннă консервантсем биобактерисемпе пуян. Вĕсемпе вырăнлă усă курсан сенаж-силосри тутлăхлă япаласем 25-30 процент таран упранса юлаççĕ. Кун пек чух выльăх апачĕн йӳçеклĕхĕ чакать, хими составĕ лайăхланать, сахăрпа протеин шайлашăвĕ пысăкланать, çу кислоти пачах та пулмасть.

Çакна та каласа хăвармалла, хими консерванчĕсемпе усă курнă чух технологие çирĕп пăхăнмасан выльăх апачĕн пахалăхĕ малалла утăмлассии иккĕленӳллĕ пулса юлать. Кунта выльăх апачĕ хатĕрлекенсене тепĕр асăрхаттару пур. Вăхăт иртнĕ май пахалăхпа çыхăннă çитменлĕхсем вăй ан илччĕр тесен янтăлакан апат-çимĕç пахалăхне кая хăвармасăр паянах тĕрĕслеттерсе тăмалла. Ăна кура производствăна планлама пулать. Ку вара каллех хуçалăх экономики çине витĕм кӳрет.

**– Апат пахалăхне тĕрĕслеттерекенсем пур-и?**

– Хисеп мар, пахалăх малти вырăнта тăнине кашниех пĕлет пулсан та паян хатĕрлекен апат пахалăхне Суворов яч. хис., Е. Андреев яч. хис., «Свобода» хуçалăхсем çеç тĕрĕслеве илсе килчĕç-ха. Ыттисен те çывăрса юлас марччĕ. Апат янтăланă май унăн пахалăхне тăтăш тĕрĕслеттерсе тăрасси пирки манас марччĕ. Сенаж-силос тунă чух консервантсемпе усă курни апат тутлăлăхне ӳстерет тата ун пек апат час пăсăлмасть, çу кислоти те унта пуçтарăнмасть.

Сăмахăма вĕçлесе выльăх апачĕ хатĕрлекенсем унăн пахалăхне тĕрĕслесе тăрассипе пирĕнпе тачă çыхăнса ĕçлесse шанас килет. Пĕрле пĕр тĕллевлĕ ĕçлесен апат пахалăхĕ те пулĕ, производство калăпăшĕ те ӳсĕ, хуçалăх экономики те тĕрекленĕ.

Апат пахалăхне эпир хуçалăхсенне çеç мар, уйрăм çынсенне те тĕрĕслетпĕр.

ОАО «ГАЗПРОМ» ФИЛИАЛ ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород»

# ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЕНИЕ

ЧЕБОКСАРСКОЕ ЛИНЕЙНОЕ ПРОИЗВОДСТВЕННОЕ УПРАВЛЕНИЕ МАГИСТРАЛЬНЫХ ГАЗОПРОВОДОВ УВЕДОМЛЯЕТ юридических и физических лиц, владеющих и обрабатывающих землю или (и) производящих работы в Моргаушском районе Чувашской Республики, что на территории Моргаушского района находятся магистральные газопроводы (МГ) и газопроводы-отводы (далее по тексту - газопроводы), эксплуатируемые под рабочим давлением до 75 кг/см$^2$. Глубина залегания газопроводов (от верхней поверхности трубопроводов) составляет не мене 0,8 метров.

«Правилами охраны магистральных трубопроводов», утв. ГГТН РФ 24.04.92г. (внесены дополнения 23.11.94 г), в целях обеспечения нормальных условий эксплуатации и исключения возможности повреждения газопроводов устанавливаются охранные зоны по 25 м в обе стороны от оси любого газопровода.

Минимальное расстояние от газопроводов до объектов различного назначения установлено на основании СНиП 2.05.06-85* и для находящихся на территории района газопроводов составляет от 100 метров до 350 метров.

В охранных зонах газопроводов запрещается производить всякого рода действия, могущие нарушить нормальную эксплуатацию трубопроводов, либо привести к их повреждению, в частности:

а) перемещать, засыпать и ломать опознавательные и сигнальные знаки, контрольно - измерительные пункты;

б) открывать люки, калитки и двери необслуживаемых усилительных пунктов кабельной связи, ограждений узлов линейной арматуры, станций катодной и дренажной защиты, линейных и смотровых колодцев и других линейных устройств, открывать и закрывать краны и задвижки, отключать или включать средства связи, энергоснабжения и телемеханики трубопроводов;

в) устраивать всякого рода свалки, выливать растворы кислот, солей и щелочей;

г) разрушать берегоукрепительные сооружения, водопропускные устройства, земляные и иные сооружения (устройства), предохраняющие трубопроводы от разрушения, а прилегающую территорию и окружающую местность - от аварийного разлива транспортируемой продукции;

д) бросать якоря, проходить с отданными якорями, цепями, лотами, волокушами и тралами, производить дноуглубительные и землечерпальные работы;

е) разводить огонь и размещать какие-либо открытые или закрытые источники огня.

В охранных зонах трубопроводов без письменного разрешения предприятий трубопроводного транспорта запрещается:

а) высаживать деревья и кустарники всех видов, складировать корма, удобрения, материалы, сено и солому, располагать коновязи, содержать скот, выделять рыбопромысловые участки, производить добычу рыбы, а также водных животных и растений, устраивать водопои, производить колку и заготовку льда;

б) сооружать проезды и переезды через трассы трубопроводов, устраивать стоянки автомобильного транспорта, тракторов и механизмов, размещать сады и огороды;

в) производить мелиоративные земляные работы, сооружать оросительные и осушительные системы;

г) производить всякого рода открытые и подземные, горные, строительные, монтажные и взрывные работы, планировку грунта.

Письменное разрешение на производство взрывных работ в охранных зонах трубопроводов выдается только после представления предприятием, производящим эти работы, соответствующих материалов, предусмотренных действующими Едиными правилами безопасности при взрывных работах;

д) производить геологосъемочные, геолого - разведочные, поисковые, геодезические и другие изыскательские работы, связанные с устройством скважин, шурфов и взятием проб грунта (кроме почвенных образцов).

Владельцы земельных участков не могут строить какие бы то ни было здания, строения, сооружения в пределах установленных минимальных расстояний до объектов системы газоснабжения; такие владельцы не имеют права чинить препятствия организации - собственнику системы газоснабжения или уполномоченной ею организации в выполнении ими работ по обслуживанию и ремонту объектов системы газоснабжения, ликвидации последствий возникших на них аварий, катастроф. (ФЗ от 31.03.1999 г. № 69-ФЗ «О газоснабжении в РФ»).

Органы исполнительной власти и должностные лица, граждане, виновные в нарушении правил охраны магистральных трубопроводов, газораспределительных сетей и других объектов систем газоснабжения, строительстве зданий, строений и сооружений без соблюдения безопасных расстояний до объектов систем газоснабжения или в умышленном блокировании либо повреждении, иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действиях, несут ответственность в соответствии с законодательством Российской Федерации.

Здания, строения и сооружения, построенные ближе установленных строительными нормами и правилами минимальных расстояний до объектов систем газоснабжения, подлежат сносу за счёт средств лиц допустивших нарушения.

Материальный ущерб, нанесённый организации – собственнику системы газоснабжения в результате умышленного её блокирования или повреждения либо иных нарушающих бесперебойную и безопасную работу объектов систем газоснабжения незаконных действий, возмещается в установленном порядке виновными лицами или принявшими противоправные решения лицами.

При рассмотрении соответствующими органами ходатайства о предоставлении земельных участков для указанных целей место расположения объектов строительства должно предварительно согласоваться с ЛПУМГ. Перед началом работ необходимо получить письменное разрешение Чебоксарского ЛПУМГ на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода. Производство работ без разрешения или по разрешению, срок действия которого истек, ЗАПРЕЩАЕТСЯ.

Получив разрешение на производство работ в охранной зоне магистрального трубопровода, необходимо до начала работ вызвать представителя Чебоксарского ЛПУМГ для установления точного местонахождения трубопровода, определения его технического состояния и взаиморасположения с сооружениями проектируемого (строящегося) объекта. В процессе строительства необходимо письменно за 5 суток до начала уведомить Чебоксарское ЛПУМГ о времени производства тех этапов работ, специально указанных в выданном разрешении при которых необходимо присутствие представителя Чебоксарского ЛПУМГ.

По всем вопросам, относительно производства земляных работ в зонах газопроводов, обращаться по адресу:

429620, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 25, Филиал ООО «Газпром трансгаз Нижний Новгород» – Чебоксарское ЛПУМГ, тел. 8-(835) - 30-54-09, 30-54-22.

# Пуçарулăхпа хастарлăх ытларах кирлĕ

**Çамрăксен форумĕ**

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).**

Муркаш, Оринин, Юнкă, Ярославка, Чуманкасси, Уйкас Янасал, Ильинка, Катькас, Йӳçкасси ял тăрăхĕсем – çакăнта пурăнаççĕ иккен районти чи хастар, малашлăхра ура çине çирĕп тăрас тĕллевлĕ çамрăксем. Мероприятие районти вунă ытла ĕç коллективĕнчи çамрăксем хутшăнчĕç. Вĕсем ятарлă вăйă хыççăн пĕр-пĕринпе часах пĕр чĕлхе тупрĕç.

Тăрăшуллă çамрăксене ĕçри çитĕнӳсемшĕн район администрацийĕн Хисеп грамотипе тата Тав çырăвĕпе чысларĕç. Нумаях пулмасть республикăри «МолГород» вĕренӳ форумне хутшăннисене тĕп хуларан килнĕ хăнасем ятарлă сертификатсем пачĕç. Республика форумĕн ĕçне унта хутшăннă хастар çамрăксем района çитерчĕç те: унти интереслĕ те вĕрентӳллĕ самантсемпе Муркашра усă курчĕç.

«Çамрăксем – политикăра» блок ĕçĕ усă калаçу евĕр иртрĕ. Яш-кĕрĕмĕн ыйту чылай: ĕç тупма та, тепĕр чухне практикăна вырнаçма та йывăр. Общество эрех ăшне «путма» пуçлани те пăшăрхантарать. Калаçура районти ытти çивĕч ыйтусене хускатса нумай канашларĕç. Унта ЧР Президент администрацийĕн патшалăх влаç органĕсемпе тата обществăлла пĕрлешӳсемпе ĕçлекен пай пуçлăхĕ Д. Щепелев, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов, унăн çумĕ Л. Тарасова, республикăри «Çамрăксен технологийĕсем» обществăлла пĕрлешĕвĕн ертӳçи А. Ефимов, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕсем В. Вязов, Н. Ванеркин тата П. Бирюков хутшăнчĕç. Вĕсем панă сĕнӳ-канашсене пĕтĕмлетсе çакна калама пулать. Çамрăксен политикăра, унта кăна мар, кирек епле сферăра та паларас тесен малтанах лайăх ĕçлеме пултарнине кăтартса памалла. Çакна шăпах ĕçсемпе çирĕплетмелле те. Апла пулсан ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăмалла, активлă пулмалла.

Мĕнрен пуçламалла? Тата бизнеспа çыхăннă çакăн евĕр ытти ыйту çине хурав илес текенсем «Старт-ап» блок тавра пухăнчĕç. Унта Мăн Сĕнтĕрти А. Петров уйрăм предприниматель, районти бизнес-инкубатор ертӳçи Е. Субботин тата район администрацийĕн экономика пайĕн специалисчĕ В. Пушкова пуçарас ĕçре малтанхи утăмсене тунă чух мĕн çине тимлĕх уйăрмаллине вĕрентрĕç. Ку блокра çамрăксем собриологи наукипе (урăлăх çинчен вĕрентет) те паллашрĕç. Пĕр минут та усăсăр иртмерĕ форумра.

Интереслĕ программăна татах та интереслĕрех тума тĕрлĕ вăйăсем пулăшрĕç: пейнтбол, геокешинг, спорт ташшисем, волейбол. Пейнтбол вăййине çамрăксене Н.Г. Ванеркин парнелерĕ темелле: укçа-тенкĕ тăкаклама тивмерĕ яш-кĕрĕмĕн.

Форум çинчен сăмаха вĕçленĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов çамрăксем умĕнче каланине илсе кăтартас килет. «Çĕр çине килнĕ кирек хăш ăрăвăн та Çĕр çинчи лару-тăрăва ăна йышăннă вăхăтринчен лайăхрах туса хăварма тăрăшмалла», – терĕ Юрий Александрович. Апла пулсан ĕç кашнин валлиех çителĕклĕ.

**Н. НИКОЛАЕВА.**



**Сăн ӳкерчĕкре: Наталия Романова, Андрей Миронов, Ольга Прокопьева – Муркаш ял тăрăхĕнчи çамрăк специалистсем – пейнтбол вăййине хатĕр.**

# Юн парасси – пархатарлă ĕç



**Сывлăх**

***Июнĕн 30-мĕшĕнче Муркашра Донор кунĕ иртрĕ. Юн пама пынă çын больница коридорĕнче сахал марччĕ. Вĕсен шурă халатлисем хăйсем те йышлăччĕ.***

***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Валентина Николаевна Сергеева акушер та пирĕн корреспондент çитнĕ вăхăтра юн пама вырнаçса ларчĕ. Мисемĕш çултанпа юн паратăр тесе ыйтсан медицина ĕçченĕ çулĕпе уйăхне тĕрĕс астуманнине пĕлтерчĕ. «Анчах та 1975-мĕш çултанпа çултăлăкра икĕ хутчен яланах юн панă», – терĕ вăл. Больницăра вăй хураканскер чирлĕ çынна юн епле кирлĕ пулма пултарнине ытисенчен çивĕчрех туйни паллă ĕнтĕ. Çавăнпах çак пархатарлă ĕçрен юлмасть Валентина Николаевна.***

***Тăхăр сехет тĕлне юн паракансен ячĕ-хушамачĕсене çырнă журналта 30 çынна яхăн килни паллăччĕ. Муркашри тĕп больницăран пĕлтернĕ тăрăх вара Муркашра пурĕ 73 çын юн панă.***

**Н. АНДРЕЕВА**
**сăн ӳкерчĕкĕ.**

# Инсульта çывăха ярас мар тесен

**Врач канашĕ**

Инсульт нумай чухне çын вилнин сăлтавĕ пулса тăрать. Çак хăрушă чир аталанасси çине мĕн витĕм кӳрет-ха? Хăрушлăха епле майпа сирме пултаратпăр?

«Çын шăпи – унăн характерĕнче». Çак каларăш инсультшăн та пĕр килет. Пире мĕнле воспитани пани, эпир пурнăç çине мĕнле пăхни, кирлĕ-кирлĕ маршăн пăшăрханни, стреслă лару-тăрăва лекме пултарни питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Апла пулсан пĕр енче пурнăçри çирĕплĕх, оптимизм, ăс-тăн шайĕ (вĕренӳ кăна мар, пурнăçра чи кирлине уйăрса илме пĕлни те), тепĕр енче – пустуйшăн тĕлсĕр хыпаланса çӳрени, стресс, пĕрмай шиклени. Стресс вара шăпах инсульт пуçарса яракан фактор.

Çын çут çанталăкăн мĕнле условийĕсенче пурăннинчен, вăл мĕнле апатланнинчен, активлă хусканусемсĕр пурăннинчен те унăн сывлăхĕ мĕнле пуласси нумай килет. Çавăнпа та кашни çын инсульт хăрушлăхне кăларса тăратакан хăш-пĕр факторсене улăштарма пултарать. Теприсене вара çĕнтерме те. Вĕсем: сиенлĕ йăласем, тĕрĕс мар пурнăç йĕрки – пирус туртни, эрех ĕçни, наркотик йышăнни, ытлашши çини, тĕрĕс мар диета, хусканусăр пурнăç.

Инсульт хăрушлăхне пысăк юн пусăмĕ, чĕре чирĕсем, юнра холестерин ытлашши пулни, диабет, алă-урасенчи юн тымарĕсен атеросклерозĕ те кăларса тăратаççĕ.

Çын улăштарма пултарайман факторсем – çул (возраст) тата хĕрарăм е арçын пулни. 55 çултан иртнисен инсульт пулас хăрушлăх татах та пысăкланать. Çавăнпа та ку вăхăтра медицина тишкерĕвĕсем тăвасси, аслă ăрурисене туллин сиплесси пысăк тимлĕх ыйтать. Арçынсен инсульт пулас хăрушлăх пысăкрах. Апла пулсан 40–45 çулхи арçынсен инсульт патне илсе çитерекен (миокард инфаркчĕ патне те) хăрушлăх факторĕсене тупса палăртмалла.

Пуç миминчи юн çаврăнăшне йĕркерен кăларакан – инсульт патне илсе çитерекен – питĕ курăмлă енсенчен пĕри – пирус туртни. Туртакан хĕрарăмсемпе арçынсен инсульт пулас хăрушлăх ытти пур ӳсĕмри çынсемпе танлаштарсан та 50 процент чухлĕ ытларах. Нумай туртакансен – сахал туртакансенчен тата икĕ хут пысăкрах. Çапла вара пирус туртма пăрахни – инсультран сыхланмалли чи хăвăрт тата чи йӳнĕ май. Çавăнпа та туртма пăрахмалли пур мелсемпе те усă курмалла.

Эрех вичеçсĕр ĕçни те çакăн пек хăрушлăх кăларса тăратать.

Ытлашши çинипе тата самăрланнипе тĕрлĕ чир-чĕр аталанни те организмшăн хăрушлăх кăларса тăратать. Çакăнпа пĕрле акă юн пусăмĕ пысăк (вăл яланхи чухне мĕнле пулнине пĕлмелле!), холестерин ытлашши тата диабет пулни пуç миминчи юн çаврăнăшĕшĕн пушшех те сиенлĕ. Апла врачпа канашласа ятарлă диетăна пăхăнмалла. Юн пусăмне те мĕнле майсемпе хăвăрт йĕркене кӳртмеллине врачпа канашласа пĕлмелле.

Хусканусем тăвассине йăлана кĕртмелле: велосипедпа ярăнмалла, шывра ишмелле тата вăй парса ытти тĕрлĕ хусканусем те тумалла, çӳремелле. Эрнере 3–4 хутран, кунсерен 20–40 минутран сахал мар. Хусканусем туни пирĕн суставсем, чĕре тата юн тымарĕсем çине лайăх витĕм кӳрет.

40–50 çулсенчи çынсен юнри холестерина çултăлăкра пĕр-икĕ хутчен тĕрĕслесе тăмалла. Ăна чакармалла пулсан çак ĕçе хăвăр пĕлнĕ меслетпе мар, врач сĕнĕвĕсене тĕпе хурса, унпа канашласа пурнăçламалла.

**В. ВАСИЛЬЕВ,**
**Муркашри тĕп больницăри невролог врач.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Кăçалхи анкарти утти сутатпăр. Платкасси ялĕ. Тел.: 8-919-661-33-17.**

* * *

**ОАО «Ядринмолоко» требуются грузчики (зарплата от 13000 руб.), полный соц. пакет. Тел. для справок: (835-47)23-8-42.**

* * *

**В д. Синьял-Оточево продается старый дом 7мх7м на дрова. Тел.: 8-927-66-300-73.**

* * *

**СХПК «Герой» срочно принимает на постоянную и сезонные работы тракториста-машиниста, комбайнеров на зерноуборочные комбайны СК-5 «Нива», водителей грузовых автомобилей, в т. ч. на перевозку опасного груза (бензовоз) и автокрановщика на автомобильный кран. Оплата своевременная и достойная. Тел.: 67-5-79; 8-953-016-00-01, 8-953-016-00-07. 3-3.**

* * *

**Требуются каменщики. Тел.: 40-45-75, 8-965-689-41-33.**

* * *

**Кăçалхи тюкланă рулонти утă сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-937-958-51-14.**

* * *

ОАО «ВымпелКом» планирует обратиться в Кабинет Министров Чувашской Республики с ходатайством о переводе земельного участка площадью 400 кв. м., расположенном юго-западнее н.п. Нискасы Ярославского сельского поселения, в земли промышленности и иного специального назначения с целью заключения долгосрочного договора аренды для размещения башни базовой станции сотовой радиотелефонной связи. По всем вопросам, касающимся размещения и работы объекта, обращаться в отдел имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района по тел.: (835-41)62-5-99, а также в техническую дирекцию ОАО «ВымпелКом» по телефону в Чебоксарах: 62-78-14.

* * *

**Требуются студенты на стройку: штукатуры, монтажники навесного вентилируемого фасада. Тел.: 8-961-333-47-32. 2-5.**

* * *

**ООО «Металлком» закупает лом черных и цветных металлов по высоким ценам. Тел.: 8-903-389-29-93. 2-2.**

* * *

**В салон мягкой и корпусной мебели в с. Моргауши требуется продавец-консультант. Тел.: 8-917-679-87-61.**

Сделай подарок себе и своим близким – закажи ювелирные изделия.
ЮВЕЛИРНАЯ МАСТЕРСКАЯ
– изготовление ювелирных изделий, скидки;
– лазерная гравировка;
– скупка драгоценного металла.
Адрес: Дом быта, рабочий день: понедельник – пятница с 9-00 до 17-00 час. Тел.: 8-927-66-88-501. 1-2.

**Паломнические поездки в Храм Архангела Михаила (лечение и исцеление) с. Старое Чекурское Дрожжановского района Республики Татарстан. Продажа билетов в здании рынка с. Моргауши в отделе «Пластиковые окна». Подробности по тел.: 8-906-387-55-78. 5-5.**

Куплю ПУХ-ПЕРО: гусиное, утиное, новый и старый, подушки и перины. С выездом на дом.
Тел.: 8-962-561-81-15. 1-2.

**Кредитный потребительский кооператив «СОДРУЖЕСТВО»:**

**ВЫДАЕТ ЗАЙМЫ ПАЙЩИКАМ** на любые неотложные цели, а также на покупку и строительство жилья с использованием средств материнского капитала. Низкие процентные ставки, доступно и оперативно;

**ПРИНИМАЕТ СБЕРЕЖЕНИЯ ПАЙЩИКОВ** на привлекательных условиях. Действуют льготные ставки для пенсионеров, инвалидов.

Наш адрес: с.Моргауши, ул.50 лет Октября, д.23 (здание ОАО «Моргаушскавтотехсервис», 2 этаж), тел.8-919-673-42-19. 4-6.
www.kpksodrugestvo.ru

**МАГАЗИН-САЛОН ГАЗОВЫЕ ТЕХНОЛОГИИ**
остановка п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13 (бывшее здание типографии)

**РЕАЛИЗУЕМ:**
- газовые котлы SIBERIA, АОГВ, Газлюкс (Газеко), КСГ-очаг
- газовые колонки Газеко
- газовые плиты Газлюкс
- стабилизаторы напряжения для газовых котлов
- счетчики газа, сигнализаторы
- запасные части
- газовые генераторы

**ВЫПОЛНЯЕМ:**
- проекты газификации
- квалифицированный монтаж

**АКЦИЯ! Мы привозим и устанавливаем вам газовую плиту БЕСПЛАТНО! т.: 8-987-668-04-83**


## Прогноз погоды

| | среда 6 июля | | | | четверг 7 июля | | | | пятница 8 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +21 | +26 | +28 | +23 | +19 | +26 | +28 | +23 | +21 | +26 | +26 | +22 |
| Давление мм | 744 | 744 | 743 | 742 | 743 | 744 | 743 | 742 | 743 | 744 | 744 | 743 |
| Влажность % | 79 | 65 | 61 | 84 | 97 | 71 | 56 | 67 | 87 | 75 | 64 | 81 |
| Ветер | В | В | Ю | З | З | С | З | З | С-З | С | С-В | С-З |
| м/с | 4 | 5 | 4 | 3 | 2 | 1 | 3 | 3 | 1 | 1 | 1 | 1 |
| Солнце восход/заход | | 04:16 | 21:39 | | | 04:17 | 21:38 | | | 04:18 | 21:37 | |
| Луна восход/заход | | 11:05 | 23:11 | | | 12:31 | 23:27 | | | 13:58 | 23:45 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ МАКАРОВА Р.А.
Пичете панă 05.07.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4282.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.